Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Гордеева Светлана Денисовна**

**Книга: Верить в чудеса = Тӗлӗнтермӗшсен тӗнчи**

**Стихотворение: Чи-чи маттурри**

Урамра хур тӗкӗ тупрăм,
Çирӗплетрӗм çӳç çине.
Ăшăмра, пӗлсемӗр, туйрăм
Хам чи-чи маттуррине.

Эп хăюллă, эп – индеец,
Çивӗч куç вăл – эп, ара,
Ман пек урăх тӗл переймӗç
Ухăран ухутара.

Тискер кайăка çӗнтертӗм
Çӗр хăвăлӗнче пӗччен.
Хӗр ачасене пӗлтертӗм –
Ӗненмеççӗ халиччен.

Юлташсем манран куласшăн
Йытăран эп тарнăран.
Эй, çав анчăк кам вăл маншăн
Тигрпа танлаштарсан?!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.